**Кĕрешме чĕнеççĕ**

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă çулхине чăвашсен хальхи паллă композиторĕ Филипп Миронович Лукин Мускаври консерваторин хорпа дирижер факультетĕнче вĕреннĕ. 1942 çулта унăн диплом илмелле пулнă. Анчах вăл Тăван çĕршыв умне тухса тăнă пысăк инкекрен аякра юлма пултарайман. Хĕрлĕ Пресня ополченецĕн билетне алла илнĕ хыççăн фронта тухса кайнă. Унпа пĕрле пĕр дивизи отделенийĕнче чăвашсем лайăх пĕлекен Владимир Кривоносов композитор пулнă. Вĕсем Мускав — Вязьма (Смоленск облаçĕ) маршрутсемпе çӳресе концертсем лартнă. Каярахпа Филипп Мироновичăн

чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕпе пĕрле Калинин тата Брянск фрончĕсенче пулма тӳр килнĕ.

Художник туйăмĕпе пурăннă Ф.Лукин çав çулсенче чи малтан халăх шăпи, çĕршыв шăпи çинчен шухăшланă. Вăл тăшмана хирĕç кĕрешме чĕнекен юрăсем çырма тытăнать. Вăрçăн малтанхи çулĕсенчех А.Эсхель, А.Кăлкан, В.Долгов сăмахĕсем тăрăх «Çапăçу юрри», «Хĕрлĕ Çарти туссене», «Колхоз хĕрĕн юрри», «Иван Поляков паттăр» юрăсем çырать.

Хаяр вăрçă вăхăтĕнче Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ паттăрсем çинчен мирлĕ вăхăтра та сахал мар произведени çырать. Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 30 çул çитнĕ тĕле вăл, сăмахран, арçынсем юрламалли «Минут çурă шăпах тăратпăр» (сăмахĕсем Г. Ефимовăн) реквиемлă хор, «Çăкăр» баллада (сăмахĕсем А. Воробьевăн) кĕвĕленĕ. «Çăкăр» балладăра вăрçă асапне кăтартакан мирлĕ вăхăтри хаваслă пурнăçпа танлаштарса уçса парать. Çак произведени пирĕн республикăри концерт залĕсенче кăна мар, Мускавра, Горькире, Хусанта янăрарĕ, ăна пур çĕрте те ăшшăн йышăнчĕç.

Вăрçа питлекен, миршĕн кĕрешме чĕнекен произведенисем каярахпа та сахал мар çырчĕ Ф. Лукин. Вĕсенчен «Мир пултăр çĕр çинче» (сăмахĕсем В. Давыдов-Анатрин), «Мирлĕ пурнăçшăн» (сăмахĕсем А. Алган), пирĕн ентеш Николай Афанасьев çинчен хывнă «Сана манмастпăр, Афанасьев» (сăмахĕсем В.Давыдов-Анатрин) тата ытти произведенисене асăнма пулать.

Икĕ çул каялла вара музыкăна юратакансем унăн çĕнĕ ĕçĕпе – хутăш хор валли çырнă «Пуçне хучĕç вăрçă хирĕнче» балладипе (сăмахĕсем В.Ахунăн) паллашрĕç. Ăна пĕрремĕш хут Атăлпа Урал хушшинчи автономиллĕ республикăсен Шупашкарта пулса иртнĕ виççĕмĕш музыка фестивалĕнче юрласа пачĕç. Ку вăл — Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 40 çул çитнĕ ятпа хатĕрленĕ чи паллă произведенисенчен пĕри. Ун пирки эпир уйрăмах тĕплĕн чарăнса тăрасшăн.

Акă, шăплăхра малтанхи сасăсем çураласçĕ. Вăрçăра виçĕ ывăлне çухатнă хĕрарăм васкамасăр, чун-чĕрине ыраттарса хăйĕн хуйхи-суйхи çинчен каласа парать. Унтан хорта хĕрарăмсен тунсăхлă сассисем илтĕнеççĕ. Вĕсем нумай çул хушши чĕрери вут-çулăмпа асапланакан салтак амăшĕпе пĕрле хурланаççĕ. Автор балладăра В.Воробьевăн вăрçă çулĕсенче анлă сарăлнă «Шурă кăвакарчăн» патриотла юрă кĕввине çывăх интонацисемпе усă курать. Анчах вĕсем çав юрăран тӳрремĕнех илнĕ интонацисем мар. Вĕсем хăйне евĕр, балладăри тĕп шухăшпа килĕшӳллĕн янăраççĕ. Произведенире лирикăллă кĕвĕсем çавăн пекех хăш-пĕр енчен чăваш халăх юррисене çывăх тăраççĕ. Вĕсем урлă автор уйрăм çынсен шăпи тăван çĕр шăпипе уйрăлми тачă çыхăннине кăтартса парать.

Çухатăва каялла тавăрма çукки çинчен калакан кĕвĕсем майĕпен чакса пыраççĕ. Анчах музыка хăвачĕ, унăн нацилĕхĕ ытларах та ытларах палăрать. Халăх салтак амăшĕпе ырă кăмăллă, çирĕп шухăшлă пулнăшăн хавхалануллă кăмăлпа тав тăвать. Çак самантра юрлама пуçлакан арçынсен патетикăлла сасси тăлăха тăрса юлнă хĕрарăмăн ывăлĕсемпе пĕрле вилнĕ воинсен сăмахĕ пек янăрать. Вĕсем пурте чăн-чăн паттăрсем пек вилнĕ, вĕсен ĕçĕ нихçан та тĕксĕмленмест. «Вĕсен ячĕ халăх асĕнче, мухтавлă халăх чĕринче. Мухтав сире, мухтав!» — тет балладăри хыпарçă, унпа пĕрле пĕтĕм хор юрлать. Сочинени оптимизмлă гимнпа вĕçленет. Юлашкинчен, паттăрсене чысласа лартнă

обелискпа унӑн тӑрринчи ҫӑлтӑр ҫинче хӗвел выляса илнӗ пек, мажорлӑ аккорд янӑрать — вӑл паттӑр салтаксем ҫинчен тепӗр хут аса илтерет тейӗн.

Балладӑра хор партийӗсемпе пӗлсе, питех те вырӑнлӑ усӑ курнӑ. Кӗвӗсем майӗпен янӑранинчен пуҫласа ытларах та ытларах пӗтӗмӗшле кульминаци патне куҫса пыраҫҫӗ. Меллӗ форма, куплетлӑ юрӑ майӗсене анлӑ аталанупа ҫыхӑнтарни баллада содержанине пуянлатать.

«Пуҫне хучӗҫ вӑрҫӑ хирӗнче» балладӑра Ф.М. Лукин хӑйӗн «Ҫӑкӑр» балладинчи традицисене малалла аталантарнӑ, вӗсене тата ытларах пуянлатнӑ. Ҫак икӗ произведени вӑрҫа хирӗҫ кӗрешме чӗнекен диптих пулса тӑрать, вӗсене гражданла-патриотла тема пӗрлештерет.

РСФСР халӑх артисчӗ, Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Ф.М. Лукин творчество ӗҫне туса пынипе пӗрлех общество ӗҫне те активлӑ хутшӑнать. Вӑл — Чӑваш АССР хор обществин правленийӗн председателӗ, СССР тата РСФСР композиторӗсен союзӗсен правленийӗн членӗ, РСФСР Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи Государство премийӗсем парас тӗлӗшпе ӗҫлекен комитет членӗ. Композитор общество ӗҫне хутшӑнса миршӗн ҫине тӑрса кӗрешет. Мире хӳтӗлекен совет комитечӗ ӑна 1983 ҫулта «Миршӗн кӗрешекене» медальпе наградӑланӑ. Ҫакӑ Ф.М. Лукин творчествине пирӗн республикӑра ҫеҫ мар, унӑн тулашӗнче те пысӑка хурса хаклани ҫинчен калать.

*Н.Зимин*, музыковед.

Коммунизм ялавӗ, 1986. Майӑн 9-мӗшӗ.